27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ЯНВАРЬ
21
ВЫРСАРНИКУН
14(6765) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсен командующине
Арми генералне ***ПЕТРОВА***
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-лейтенанта ***КОРЖЕНЕВИЧА***

УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, Карпат тăрăхĕнчи туллă-вăрманлă вырăнăн йывăр условийĕсенче наступлени туса пырса, паян, январĕн 20-мĕшĕнче, Польша çĕрĕнче **НОВЫ СОНЧ** хулине тата Чехословаки çĕрĕнче **ПРЕШОВ, КОШИЦЕ, БАРДЕВА** хулисене—çулйĕрсен паха узелĕсене тата тăшман оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене—çапăçса туртса илнĕ.

НОВЫ СОНЧ, ПРЕШОВ, КОШИЦЕ тата **БАРДЕВА** хулисене туртса илнĕ чухне çаксем чапа тухнă: **МОСКАЛЕНКО** генерал-полковникăн, **ГРЕЧКО** генерал-полковникăн, **ГАСТИЛОВИЧ** генерал-майорăн, **ВОРОБЬЕВ** генерал-лейтенантăн, **БАТЮНЯ** генерал-лейтенантăн, **БРИЛЕВ** генерал-майорăн, чехословаксен бригада генералĕ **СВОБОДА** ертсе пыракан корпусĕ, **ШМЫГО** генерал-майорăн, **БУШЕВ** генерал-майорăн, **ВЕДЕНИН** генерал-майорăн, **МЕЛЬНИКОВ** генерал-майорăн, **МЕДВЕДЕВ** генерал-лейтенантăн, **МАТУСЕВИЧ** полковникăн, **БУШТРУК** полковникăн, **ТОМИЛОВСКИЙ** генерал-майорăн, **ИВАНОВСКИЙ** генерал-майорăн, **ВАСИЛЬЕВ** полковникăн, **ГЕРШЕВИЧ** полковникăн, **ДРЯХЛОВ** полковникăн, **ГРИНЧЕНКО** генерал-майорăн, бригада генералăн **БОЧЕКАН**, бригада генералĕн **КЛАПАЛЕКАН**, **ЛИСИНОВ** генерал-майорăн, **ГЛАДКОВ** генерал-майорăн, **ТЕТЕНКО** полковникăн, **ПРОХОРОВ** генерал-майорăн, **ДУДАРЕВ** генерал-майорăн, **ВИНОГРАДОВ** полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн **КАРИОФИЛЛИН**, **СМИРНОВ** полковникăн, **БРИЧЕНОК** генерал-майорăн, **МАХОВ** полковникăн, **СЕРГЕЕВ** полковникăн, **ЦИВЧИНСКИЙ** полковникăн, **НИКИТИН** полковникăн, **БОЧЕК** майорăн, **БРОЗГОЛЬ** полковникăн, **БОЛЬБАТ** полковникăн, **МИРОНОВ** полковникăн, **ПАВЛЕНКО** полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн **ШИРОБОКОВАН**, танковăй çарсен генерал-майорĕн **РАЙКИНАН**, **СЕРОВ** полковникăн, **ХОПКО** полковникăн, **ВАСИЛЬЕВ** подполковникăн, **ЖИРНОВ** майорăн, **МОРУС** полковникăн, **ОЛЬХОВЕНКО** подполковникăн, **ШУРЫГИН** майорăн, **ФРОЛОВ** майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн **ЖДАНОВАН**, авиаци генерал-майорĕн **ИЗОТОВАН**, авиаци генерал-майорĕн **КОТЕЛЬНИКОВАН**, авиаци генерал-майорĕн **ГОЛОВНЯН**, **МАРКОВЦЕВ** полковникăн, **НАУМОВ** майорăн, **ОБУХОВ** полковникăн, авиаци генерал-майорĕн **ЛАКЕЕВАН** летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн **КОЛЕСНИКОВАН**, инженери çарĕсен генерал-майорĕн **ГОВОРОВАН**, **ЖУРИН** полковникăн, **АСТАПОВ** полковникăн, **ЗАВИДЕНКО** полковникăн, **НАУМОВ** полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн **МАТВЕЕВАН**, **ТАРУНИН** полковникăн, **БЕЛЯНЧИК** полковникăн, **ЕФИМОВ** полковникăн, **НЕКРАСОВ** полковникăн, **КИРЕЕВ** подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, **НОВЫ СОНЧ, ПРЕШОВ, КОШИЦЕ** тата **БАРДЕВА** хулисене илсе уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсcене «**ПРЕШОВСКИ**», «**КОШИЦСКИ**» тесе ят пама, орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 20-мĕшĕнче, 20 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици **МУСКАВ**, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 4-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, çав шутра чехословаксен бригада генералĕ **СВОБОДА** ертсе пыракан корпусне, малта кăтартнă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, **НОВЫ СОНЧ, ПРЕШОВ, КОШИЦЕ** тата **БАРДЕВА** хулисене ирĕке кăларассишĕн çапăçнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн **ТАВ ТĂВАТĂП**.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 20-мĕшĕ. № 234.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсен командующине
Арми генералне ***ЧЕРНЯХОВСКИЕ***
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника ***ПОКРОВСКИЕ***

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем паян, январĕн 20-мĕшĕнче, Хĕвелтухăç Пруссири хуласене—**ТИЛЬЗИТ, ГРОСС СКАЙСГИРРЕН, АУЛОВЕНЕН, ЖИЛЛЕН** тата **КАУКЕМЕН** хулисене—çулйĕрсен паха узелĕсене тата нимĕçсен Кенигсберг енчи оборонин тĕреклетнĕ вăйлă пункчĕсене штурмласа туртса илнĕ.

ТИЛЬЗИТ, ГРОСС СКАЙСГИРРЕН, АУЛОВЕНЕН, ЖИЛЛЕН тата **КАУКЕМЕН** хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: **ЛЮДНИКОВ** генерал-лейтенантăн, **БЕЛОБОРОДОВ** генерал-лейтенантăн, **СИМИНОВСКИЙ** генерал-майорăн, **МАСЛЕННИКОВ** генерал-майорăн, **КСЕНОФОНТОВ** генерал-лейтенантăн, **МИССАН** генерал-лейтенантăн, **ОЛЕШЕВ** генерал-майорăн, **ЧЕРЕПАНОВ** полковникăн, **ЛУЦКЕВИЧ** генерал-майорăн, **ВАСИЛЕНКО** полковникăн, **БАСАНЕЦ** полковникăн, **УСАЧЕВ** генерал-майорăн, **БЛИНОВ** полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн **ДЕРЕШАН**, артиллери генерал-майорĕн **ЩЕГЛОВАН**, **ЛУКЬЯНОВ** полковникăн, **КИРДЯНОВ** полковникăн, **НОВОДРАНОВ** полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн **БУТКОВАН**, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн **БУРДЕЙНЫЙĂН**, **ЦИНЧЕНКО** полковникăн, **ПЕТРОВСКИЙ** полковникăн, **ХАЛИЕВ** подполковникăн, **СОММЕР** полковникăн, **КУЗНЕЦОВ** полковникăн, **КОВАЛЕВ** подполковникăн, **МИРОНОВ** подполковникăн, **ЛУШПА** полковникăн, **ДРОБЫШ** подполковникăн, **СУДАКОВ** полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн **ЗАХАРОВАН**, **ПРУТКОВ** полковникăн, авиаци генерал-майорĕн **НЕЧИПОРЕНКАН**, **ЧУЧЕВ** полковникăн, авиаци генерал-майорĕн **ШЕВЧЕНКАН**, **ХАТМИНСКИЙ** полковникăн, **ЗИМИН** полковникăн, **ЗАКЛЕП** подполковникăн, **ШИНКАРЕНКО** полковникăн, авиаци генерал-майорĕн **МОЛОКОВАН**, **АНДРЕЕВ** полковникăн, **ЕГОРОВ** полковникăн, **ЗОЛОЧЕВСКИЙ** подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн **КОЛМАКОВАН**, инженери çарĕсен генерал-майорĕн **ГНЕДОВСКИЙĔН**, **КОРОТКОВ** полковникăн, **ПАРХОМЧУК** полковникăн саперĕсем; **ЗАХАРОВ** полковникăн, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн **СОРОКИНАН**, **ЦИЛБОВ** подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, **ТИЛЬЗИТ, ГРОСС СКАЙСГИРРЕН, АУЛОВЕНЕН, ЖИЛЛЕН** тата **КАУКЕМЕН** хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсcене «**ТИЛЬЗИТСКИ**» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 20-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици **МУСКАВ**, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, **ТИЛЬЗИТА** тата çӳлте асăннă ытти хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, **ТИЛЬЗИТ** хулине тата çӳлте асăннă ытти хуласене туртса илессишĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн **ТАВ ТĂВАТĂП**.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 20-мĕшĕ. № 235.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне **ЖУКОВА**
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника **МАЛИНИНА**

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, танксен соединенийĕсемпе пехота хăвăрт наступлени туса пынă хыççăн, паян, январĕн 20-мĕшĕнче, **ВЛОЦЛАВЕК** тата **БЖЕСЬЦЬ-КУЯВСКИ** хулисене — çулйĕрсен пысăк узелĕсене тата нимĕçсен Висла шывĕн сулахай çыранĕнчи оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене — туртса илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем, **ВАРТА** шывĕ урлă каçса, çапăçса **КОЛО** хулине тытса илнĕ.

ВЛОЦЛАВЕК, БЖЕСЬЦЬ-КУЯВСКИ тата **КОЛО** хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: **ЧУЙКОВ** генерал-полковникăн, **БЕРЗАРИН** генерал-лейтенантăн, **ФОМИЧЕНКО** полковникăн çарĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн **ВЕДЕНЕЕВАН**, танковăй çарсен генерал-майорĕн **ТЕЛЯКОВАН**, **БАБАДЖАНЯН** полковникăн, **ДРЕМОВ** генерал-майорăн, **ПОТАПОВ** полковникăн, **ЧЕРЯПКИН** полковникăн, **КОПЫЛОВ** полковникăн, **ШАМАРДИН** полковникăн, **ТЕМНИК** полковникăн, **ЛИПАТЕНКОВ** полковникăн, **ГУСАКОВСКИЙ** полковникăн, **МОРГУНОВ** полковникăн, **ПАШКОВ** полковникăн, **ЖИЛ** подполковникăн, **РЫБКИН** подполковникăн, **БУГАЕНКО** майорăн, **ГУРЕНКО** майорăн, **КОЧКАРЕНКО** майорăн танкисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн **ПЛАСКОВАН**, артиллери генерал-майорĕн **ФРОЛОВАН**, **ДМИТРИЕВ** подполковникăн, **КОТОВ** подполковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн **ТОКАРЕВАН**, авиаци генерал-майорĕн **ДЗУСОВАН**, авиаци генерал-лейтенанчĕн **САВИЦКИЙĔН**, авиаци генерал-майорĕн **КАРАВАЦКИЙĔН**, **СИТКИН** полковникăн летчикĕсем; **БЕЛЬСКИЙ** полковникăн, **ХАРЧЕВИН** полковникăн, **ЧИСТЯКОВ** майорăн саперĕсем; **СМОЛИЙ** полковникăн, **ЗАХАРОВ** подполковникăн, **ИГНАТОВ** полковникăн, **УЛЬЯНЕНКО** майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, **ВЛОЦЛАВЕК, БЖЕСЬЦЬ-КУЯВСКИ** тата **КОЛО** хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсcене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 20-мĕшĕнче, 23 сехет те 30 минутра хамăр Тăван çĕршыв столици **МУСКАВ**, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, **ВЛОЦЛАВЕК, БЖЕСЬЦЬ-КУЯВСКИ** тата **КОЛО** хулисене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, **ВЛОЦЛАВЕКА** тата çӳлте асăннă ытти хуласене ирĕке кăларассишĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн **ТАВ ТĂВАТĂП**.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 20-мĕшĕ. № 236.



Ленин çулĕпе. Сталин ертсе пынипе

Большевиксен партине организацилекенĕ, совет государствин никĕсне хываканĕ, марксистла наукăн аслă деятелĕ Владимир Ильич Ленин пирĕнтен уйăрăлнăранпа çирĕм пĕр çул çитрĕ.

Ленин вилнĕренпе иртнĕ çирĕм пĕр çул хушшинче пирĕн совет халăхĕ социализмлă обществăн ленинла-сталинла планне пурнăçа кĕртессишĕн, Октябрьти Социализмлă Аслă Революцире тунă историллĕ çĕнтерӳсене хӳтĕлесе хăварассишĕн пĕтĕм вăйя хурса кĕрешрĕ. Ленин вилнĕ хыççăнхи кашни çулталăк пирĕн государство, пирĕн парти, пирĕн халăх пурнăçĕнче историллĕ событисем пулса иртнипе палăрса тăрать. Çав событисем Ленин вĕрентĕвĕн аслă чăплăхне çирĕплетсе параççĕ.

Иртнĕ çулталăк хушшинче вара вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен пĕтĕм тĕнчере уйрăмах пысăк событисем пулса иртрĕç, çав çулталăк вăл Ленин идейисен вăйĕпе пурнăçлăхне çĕнĕрен çав тери чаплăн çирĕплетсе пачĕ.

Сталин юлташ ертсе пынипе паттăр Хĕрлĕ Çар 1944 çулта нимĕç çарĕсене аркатмаллах пыра-пыра çапрĕ, нимĕç оккупанчĕсене Совет Союзĕн çĕрĕсем çинчен хăваласа кăларчĕ.

Верховнăй Главнокомандованин планĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, Хĕрлĕ Çар Баренц тинĕсĕнчен пуçласа Хура тинĕс патне çитиччен сарăлса выртакан мĕнпур аслă фронтра Германи çарĕсене татăклă пораженисем тӳстерчĕ, ССР Союзĕн территорине тăшманран ирĕке кăларчĕ, Совет Союзĕн государство чиккине пĕтĕмĕшпех çĕнĕрен туса йĕркелерĕ.

«Паянтан пирĕн совет çĕрĕ гитлерла ирсĕрсенчен ĕмĕрлĕхех тасалчĕ» (Сталин). Вăрçă тăшман территорийĕ çине куçрĕ. Хĕрлĕ Çар, хамăрăн государствăн тулашне тухса, вăрçăсен историйĕнче халиччен пулман походсем турĕ. Совет çарĕсем, аманнă фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнчех çапса вĕлерес тесе, ăна хыçран йĕрлесе пыраççĕ. Тăшмана хыçран хăваласа пырса, совет воинĕсем поляксене, сербсене, хорватсене, словенсене, чехсене, словаксене, норвежецсене тата Европăри ытти халăхсене фашистла чуралăхран çăлăнма, хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне çĕнтерсе илме пулăшаççĕ. Ленин совет халăхне миршĕн, халăхсен ирĕклĕхĕшĕн çирĕп тăма, реакципе агрессие хирĕç кĕрешекен халăхсене пулăшу парса тăма вĕрентсе пынă. Аслă Ленин вĕрентнине пурнăçа кĕртсе пырса, совет халăхĕ гитлерла Германие хирĕç вăйя хĕрхенмесĕр кĕрешрĕ тата кĕрешет те, вăл Европа цивилизацине фашистла варварствăпа тискерлĕхрен хӳтĕлесе хăварчĕ. Этемлĕхе чуралăх хăрушлăхĕнчен çăлчĕ. Çакăнта ĕнтĕ пирĕн халăхăн истори умĕнчи тава тивĕçлĕ аслă ĕçĕ.

Иртнĕ çулталăк хушшинче Хĕрлĕ Çар Румынине, Финляндие, Болгарие Германи майлă çапăçма пăрахтарчĕ. Çав государствăсем, фашистла Германипе тытакан çыхăнусене татса, ăна хирĕç вăрçа тухрĕç. Нимĕçсем хăйсен юлашки союзникне — Венгрне те çухатрĕç. Совет çарĕсем Венгри территорийĕн 5 пайĕнчен 4 пайне ытларах нимĕç захватчикĕсенчен тасатса çитерчĕç.

Иртнĕ çулталăк хушшинче пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар нимĕçсене пĕр миллион квадратлă километр таран территори çинчен хăваласа кăларчĕ, ку шута ССР Союзĕн ирĕке кăларнă территорийĕсем кĕмеççĕ. Хĕрлĕ Çар Европăри государствăсен вуншар миллион халăхне нимĕç оккупацийĕнчен çăлса кăларчĕ.

Сталин юлташ 1944 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă хăйĕн докладĕнче çакна кăтартса пачĕ: вăрçăн иртнĕ çулталăкĕнчи çĕнĕ пусăм вăл — Хĕрлĕ Çар нимĕç çарĕсене хирĕç туса пыракан хăйĕн операцийĕсене пĕччен мар, хамăрăн союзниксен çарĕсемпе пĕрле туса ирттерни пулса тăрать. Хĕрлĕ Çар хĕвелтухăçĕнче тунă аслă çĕнтерӳсем пирĕн союзниксене хĕвеланăçĕнче наступленилле операцисем пуçласа яма кирлĕ условисем туса пачĕç.

Хĕрлĕ Çар, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче тăшманăн 200 дивизине яхăн тытса тăрса, нимĕç çарĕсене çапса аркатма, вĕсене вăтам Италирен, Франци, Бельги çĕрĕсем çинчен тата Голланди чылай пысăк пайĕнчен хăваласа кăларма хамăрăн союзниксен çарĕсене пулăшрĕ.

Иртнĕ çулталăк Германие хирĕçле коалицин пĕтĕмĕшле ĕçĕ çĕнтерсе чапа тухнă çулталăкĕ пулчĕ; çавăншăн Совет Союзĕпе Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхĕсем пĕр боевой союза пĕрлешнĕ те ĕнтĕ. Фашистла Германие хирĕç союзлă державăсем пĕрле тата пĕрпĕрипе таччăн килĕштерсе кĕрешесси çирĕпленчĕ. Икĕ фронтăн хĕскĕчĕ хушшине хĕстерсе лартнă гитлерла Германи вилĕм шăтăкĕ умне пырса тăчĕ, тăшман темĕнле чееленсе хăтланнăн та, вăл хăй пур-пĕрех тата пуçĕпех пĕтессинчен ниепле те çăлăнса юлма пултараймасть.

Фашистла Германие хирĕç пыракан вăрçăра совет халăхне историллĕ çĕнтерӳсем тума большевиксен партийĕ май пачĕ, çакна ăна пирĕн парти Ленинăн вилĕмсĕр вĕрентĕвне çирĕп тытса пынипе пурнăçа кĕртме пултарчĕ.

Отечественнăй аслă вăрçăра совет халăхĕ малта пыракан марксизм-ленинизм теорийĕн, Ленинпа Сталинăн аслă идейисен ялавне çирĕп тытса пычĕ. Вăрçă марксистла-ленинла теорин хăватлă вăйне, унăн халăха мобилизацилеме тата организацилеме пултаракан вăйне татах та тепĕр хут уççăммăн кăтартса пачĕ. Отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра аслă Ленин тунă совет государствин пурнăçлăхĕпе хăватлăхĕ татах та уççăнрах курăнчĕ.

Сталин юлташ ертсе пыракан совет государстви тĕнчери мĕнпур государствăсенчен чи çирĕпрех государство пулни курăнчĕ.

Октябрьти Социализмлă Революци çĕнтерни туса хунă совет строй халăх массисен тĕп интересĕсемпе килĕшсе тăракан, чи пултаруллă та пурнăçлă строй пулса тăчĕ. Совет влаçĕ ĕççыннисен пултаруллăхĕсемпе организаторла таланчĕсене ӳссе чечекленме анлă майсем туса пачĕ. Вăл ĕлĕк патша Российинче чуралăхпа пусмăрта пурăннă халăхсене ирĕклĕ пурнăç пачĕ, хăйсен кунçулне хăйсен пурнăç интересĕсем хушнă пек туса йĕркелеме ирĕк пачĕ.

Ленинизмăн вилĕмсĕр идейисене пурнăçа кĕртнĕ социализмлă строй фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçă кунĕсенче хамăрăн халăха, хамăрăн хĕçпăшаллă вăйсене никам çĕнтереймен аслă вăй-хăват парса тăчĕ. Вăрçă çакна кăтартса пачĕ: ССР Союзĕ ют çĕршыв захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре хăйĕн никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварма пултаракан хăватлă держава кăна мар, вăл çав захватчиксене çапса аркатма та пултаракан держава пулса тăрать.

Вăрçă совет государствин вăйĕсене хаяр тĕрĕслӳ витĕр кăларчĕ. Çав тĕрĕслеве пирĕн халăх чыслăн тӳссе ирттерчĕ. Çакна ĕнтĕ эпир аслă Ленин хушса хăварнисене Сталин юлташ ертсе пынипе çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырса тума пултартăмăр. Ленин пирĕн партие: унăн пĕрремĕш ĕçĕ — çĕршывăн çарпа экономика тĕлĕшĕнчи хăватне çирĕплетесси пулса тăрать, тесе вĕрентнĕ. Вăл çапла каланă:

> «Пораженисем тӳснипе хавшаса ӳкмесĕр, çав çулпа малаллах каймалла, социализмлă обществăн çирĕп никĕсне чул хыççăн чул хывса пухмалла, пĕтĕм дисциплинăпа харпăрхăй дисциплинине çирĕплетессишĕн, пур çĕрте те ĕçлĕ йĕркелĕх тăвассишĕн, мĕнпур халăхсен вăйĕсене пĕрпĕрипе таччăн килĕштерсе ĕçлемел-

(Юлашки 2-мĕш страницăра)

Ленин çулĕпе, Сталин ертсе пынипе

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

ле тăвассишĕн, производствăпа продуктсем валеçес ĕçе пур енчен те шута илсе, контроллесе пымалла тăвассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле,—çакăн пек ĕнтĕ çар хăватне тата социализм хăватне туса хумалли çул», (22-мĕш том, 376—377 стр.).

Пирĕн парти, Сталин юлташ ертсе пынипе, Ленин хушса хăварнине çирĕп пурнăçа кĕртсе пырса, совет государствин çарăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи тата социализмлă хăватне никам аркатайми вăйлатса çирĕплетрĕ.

Ленин пирĕн партие çапла вĕрентнĕ: социализмлă хăватлă государство туса хумалли пĕртен-пĕр тата чăн-чăн никĕ: вăл—шултăра машинăллă промышленность пулса тăрать, унсăрăн эпир Совет влаçĕ çĕнтерсе илнисене çирĕплетсе хăварма пултараймастпăр. Сталин юлташ, хамăрăн çĕршывра социализмлă индустриализаци туса йĕркелемелли плана палăртса, ăна пурнăçа кĕртрĕ. Сталинла пятилеткăсене пурнăçа кĕртнине пула, пирĕн çĕршыв техникăпа экономика тĕлĕшĕнчен кая юлнă çĕршывран хăватлă индустриллĕ тата колхозлă держава, Хĕрлĕ Çара хамăрăн совет çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕленĕ çĕрте мĕн кирлине пурне те туса пама пултаракан держава пулса тăчĕ.

Пĕтĕм тĕнчери иртнĕ вăрçăра Россия эканса каясси умне пырса тăнă, мĕншĕн тесен патша Российин промышленноçĕ хальхипе танлаштарсан, çапăçура кирлĕ çăмăл техникăна та çителĕклĕ таран парса тăма пултарайман. Хальхи вăрçăра Совет Союзĕ фашистла нимĕç çарĕсем килсе хĕснине тӳссе ирттерчĕ кăна мар, вăл нимĕç çарĕсене вĕлермеллех пыра-пыра çапрĕ. Кунпа пĕрлех тата çакна та шута илес пулать: хальхи вăрçăра фашистла Германипе унăн çарĕ халиччен вăрçăсенче пулнă Германипе унăн çарĕнчен нумай вăйлăрах та опытлăрах пулса тăраççĕ тата вĕсем вăрçа та чылай лайăхрах хатĕрленнĕ. Çакă та паллă: гитлеровецсем, хăйсен государствин вăрçăпа экономика тĕлĕшĕнчи хăвачĕсĕр пуçне, пире хирĕç пыракан вăрçăра мĕнпур Европăн вăйĕсемпе тата ресурсĕсемпе тенĕ пекех усă курнă. Анчах çакна пăхмасăрах, Германи пурпĕрех пĕтсе ларасси патне пырса тăчĕ. Совет Союзĕ гитлерла Германирен вăйлăрах пулчĕ. Çакăнтан ĕнтĕ пирĕн çĕршыв социализмлă строительствăн 27 çулĕ хушшинче мĕнле улăпла утăм туни уйрăмах уçăмлăн курăнса тăрать.

Анчах та, нимĕç оккупанчĕсемпе вĕсен вассалĕсене хирĕç пĕр-пĕччен кĕрешсе чăтса тăрас тата вăрçа хамăр майлă çавăрса ярас тесен, пирĕн çĕршывăн вăйлăн аталаннă хуçалăх тĕлĕшпе кăна мар, тата экономикăна организацилес тĕлĕшпе, вăрçă туса пырас мастерлăх тĕлĕшпе, совет çарĕсен çапăçури шухăш-кăмăлĕ тĕлĕшпе, халăх чăтăмлă та пĕрлĕхлĕ пулни тĕлĕшпе те малта тăмалла пулнă. Çаксем енĕпе те вара Совет Союзĕ гитлерла Германирен вăйлăрах пулчĕ.

Хуçалăхăн социализмлă системинче нимĕнле уйрăм харпăрлăх интересĕсем те чăрмантарса тăмаççĕ, çавăнпа та совет халăхĕ вăрçă ыйтнисене тивĕçтерес тесе çĕршывăн экономикăллă ресурсĕсемпе туллин усă курма, производствăра тата материалсен ресурсĕсене валеçес ĕçре пĕтĕмпех планлă йĕрке туса хума, хамăрăн пĕтĕм ĕçе вăрçă хушнă пек урăхлатса йĕркелеме, пĕтĕм ĕçе фронт ыйтнă пек тата тăшмана аркатса тăкас ĕç ыйтнă пек туса пыма пултарчĕ.

Коллективлă, механизациленĕ шултăра ялхуçалăхĕ туса хуни пирĕн çĕршывра социализм çĕнтерессине пурнăçа кĕртме тата хамăрăн Тăван çĕршыв халăхĕсем никама пăхăнмасăр пурăнассине пурнăçа кĕртме май парать, тесе вĕрентнĕ Ленин. Ленин вĕрентнине асра тытса, Сталин юлташ ертсе пынипе ĕçлесе, парти ялхуçалăхне урăхлатса çĕнетрĕ. Ялхуçалăхне коллективизацилемелли ленинла-сталинла политика çĕнтернине пула, Совет влаçĕ ялта социализмлă çирĕп никĕс туянчĕ, пирĕн колхоз хресченĕсем вара Советлă Тăван çĕршывăн çирĕп тĕрекĕ пулса тăчĕç.

Пирĕн государствăн социализмла экономики, Ленинпа Сталинăн аслă планĕ тăрĕх туса йĕркеленĕскер, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре хăйне тĕрĕсе кăларчĕ, «Совет государствин экономикăллă никĕсĕ тăшманла государствăсен экономикипе танлаштарма çук вăйлăрах та тĕреклĕрех пулни курăнчĕ» (Сталин).

Фашистла Германие хирĕç пыракан кĕрешӳре Совет Союзĕ çĕнтерӳсем туни совет халăхĕн моральлĕ-политикăллă пĕрлĕхĕнчен те, пирĕн нумай нацилĕ çĕршывăн халăхĕсен туслăхĕнчен те килнĕ. Вăрçă пынă вăхăтра рабочисен, хресченсен тата интеллигенцин Союзĕ татах та ытларах тĕрекленсе пиçĕхрĕ, çакă вара совет стройĕн çирĕплĕхĕ татах та ытларах ӳснине пĕлтерет.

Вăрçă опычĕ çакна кăтартса пачĕ: пирĕн Хĕрлĕ Çара тыл пулăшса тăнă пек нихăш çара та тата нихăçан та вăйлăн пулăшса тăман. Отечественнăй вăрçăн ырă тĕллевĕсемпе хавхаланса, совет халăхĕ вăрçă йывăрлăхĕсене паттăррăн тӳссе ирттерет, хамăрăн социализмлă тăван çĕршывăн чысне, ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварас, Ленинăн-Сталинăн аслă ĕçне сыхласа хăварас тесе, пур йывăрлăхсене те çĕнтерет. Çак вăрçăра пирĕн халăх хăйĕн Советлă Тăван çĕршывне чунтан-чĕререн парăнса тăнине кăтартса пачĕ, хăй халăх-герой пулнине кăтартса пачĕ. Пирĕн халăхăн мухтавĕ ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕ. «Пирĕн халăх,—терĕ Сталин юлташ,—чăннипех те геройла халăх чапне илме тивĕçлĕ пулчĕ».

Ленинпа Сталин ертсе пынипе большевиксем Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне—нумай нацилĕ хăватлă государствăна туса хучĕç, çак государство пек çирĕп государство тĕнчере урăх çук-ха.

СССР халăхĕсен никам аркатайми ленинла-сталинла туслăхĕ Отечественнăй аслă вăрçăра уйрăмах вăйлăн палăрчĕ. Тăван çĕршыва хӳтĕлесси мĕнпур совет халăхĕсен пĕрлехи тăван ĕçĕ пулса тăчĕ. Пирĕн çĕршывра мĕнпур рассăсемпе нацисем пĕртан пулмалла тесе вĕрентекен ленинла-сталинла идеологи, халăхсен туслăхĕн идеологийĕ çирĕпленсе çитрĕ, çак идеологи гитлеровецсем туртса кăларнă тискер кайăкла национализмăн тата рассăллă курайманлăхăн идеологине пĕтĕмĕшпех çĕнтерчĕ. Совет идеологийĕ пирĕн çĕршыври халăхсене пĕр çемьене пĕтĕçтерекен тата вĕсене тĕнчери ирĕклĕхе юратакан ытти мĕнпур халăхсемпе çывхарма пулăшакан вăй пулса тăчĕ.

Совет Союзĕ ытти халăхсен прависене, вĕсен государствин никама пăхăнманлăхне хисеплес политикăна тытса пырать, çак политикăна пула вара ирĕклĕхе юратакан халăхсем пирĕн çĕршыва хисеплеççĕ. Çав политика гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешӳре демократиллĕ çĕршывсене пĕрлештермелли ялав пулса тăчĕ. Вăрçă пынă вăхăтра Совет Союзĕн тĕнчери авторитечĕ пĕрмях ӳссе пычĕ.

Фашистсем тытса пыракан рассăллă курайманлăх политики Германин шалти вăйсăрлăхĕн тата вăл политика енĕпе тăрпĕччен тăрса юлассин çăлкуçĕ пулса тăчĕ. 1942 çулта нимĕçсем енче Совет Союзне хирĕç вассальнăй çĕршывсен 60 дивизийĕ ытла кĕрешнĕ пулсан, 1943 çулта вара 50 дивизи пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ вĕсен текех çавăн пек дивизисем çук.

Совет Союзĕ çине тапăниччен гитлерла Германи 41 государствăпа дипломатиллĕ çыхăнусем тытса тăнă пулсан, халĕ вара Германи 8 çĕршывпа кăна дипломатиллĕ çыхăну тытса тăрать.

Пĕрлешнĕ нацисен çарĕсем Балканри государствăсене, Францие, Бельгие тата Европăри экономика тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăракан ытти районсене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă пирки Германи ют çĕршывсенчи стратегиллĕ чĕр таварăн ытларах пайне çухатрĕ. Çакă вара Германин экономикăллă пурнăçĕнче палăрмасăр иртсе кайма пултараймаст. Çакă вара фашистла Германие вăйлăн пырса çапни пулса тăрать, вăл Германие вăрçа вăраха тăсса пымалли майсемсĕр тăратса хăварать.

Юнлă фашизмăн пурнăçĕ кĕскелсе юлчĕ. Хĕрлĕ Çар, пирĕн союзниксен çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, аманнă фашистла тискер кайăка унăн хăйĕн шăтăкĕнчех çапса аркатас тата Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартас сехет инçе юлмарĕ.

Пулас кунсенче чи йывăр çул утса тухмалла пулнине, умра питех те хаяр çапăçусем тăнине совет халăхĕ ăнланать. Фашистла нимĕç захватчикĕсем, хăйсем пурпĕрех пĕтсе ларассине мĕн чухлĕ те пулин вăраха ярас тесе, нимĕнле майсем умĕнче те чарăнса тăмĕç. Халĕ, Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра çĕнĕ хăватлă наступлени пуçласа янă вăхăтра, совет халăхĕ тата пĕрлешнĕ нацисен халăхĕсем умĕнче тăшмана татăклăнах аркатса тăкас тата ирĕклĕхе юратакан халăхсем валли çирĕп мир туса парас задача тăнă вăхăтра, мĕнпур совет çыннисен, Ленин вĕрентнисене асра тытса, хамăрăн Советлă Тăван çĕршывăн вăрçăри тата экономика тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне татах та тимлĕнрех, татах та паттăррăнтарах ĕçлесе çирĕплетсе пымалла.

Ленин партипе халăха: тунă çĕнтерӳсемпе лăпланса лармалла мар, çĕнтерӳ темĕнле пысăк пулсан та, унпа мухтанса мăнкăмăлланса лармалла мар, тесе яланах вĕрентнĕ. Кĕрешӳ вĕçленсе пынă вăхăтсенче, çĕмĕрнĕ тăшмана татăклăнах çапса аркатмалла пулнă вăхăтсенче Ленин яланах хамăрăн вăя май пур таранах ӳстерсе пыма чĕннĕ.

Юденичăн аркатса тăкнă çарĕсем Петроград патĕнчен каялла чакнă чухне Ленин çапла чĕнсе каланă: «Юлташсем-рабочисем, юлташсем-красноармеецсем! Мĕнпур вăя пухăр! Чакса пыракан çарсене кирек мĕнле пулсан та хăваласа пырăр, вĕсене çапа-çапа аркатăр, вĕсене пĕр сехет те, пĕр минут та канма ан парăр», тенĕ Ленин.

Фашистла нимĕç захватчикĕсене татăклăнах çапса аркатмашкăн халăхăн пĕтĕм вăйне мобилизацилеме чĕнет пире Сталин юлташ.

Отечественнăй вăрçăн юлашки тапхăрĕнче халăхăн вăйне татах та ытларах мобилизацилени, совет çыннисем тылра паттăррăн ĕçлени тата Хĕрлĕ Çар фронтра татăклăн та вăйлăн кĕрешни кирлĕ. Совет халăхĕ, хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр ĕçлесе, промышленноçа, транспорта тата ялхуçалăхне çĕнĕрен ӳстерсе пырĕ, фронта пулăшассине татах та ытларах вăйлатĕ, çапла вара тăшмана татăклăнах çĕнтерес сехете çывхартĕ.

* * *

Большевиксен партийĕ тата Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕ гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра калама çук пысăк çитĕнӳсем турĕ.

Сталин юлташăн ленинла политики пирĕн çĕршыва вăрçă тĕлĕшпе хăватлă тата индустриллĕ-колхозлă çĕршыв туса хума май пачĕ. Сталин юлташăн ленинла политики Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсене туслă та пĕрлĕхлĕ çемьене пĕрлештерчĕ, пирĕн Тăван çĕршыва никам аркатайми çар лагерĕ туса хучĕ. Сталин юлташăн ленинла политики пирĕн социализмлă Тăван çĕршыва фашистла пусмăрçăсене хирĕç пыракан вăрçăра сыхласа хăварчĕ.

Эпир тăшмана татăклăнах çĕнтерес вăхăт умĕнче тăратпăр. Аслă Ленинăн сăнарĕ тата унăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ пире тăшмана татăклăнах çĕнтерме хавхалантарса пыраççĕ.

Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕ хăйĕн государствин ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварчĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн социализмлă Тăван çĕршыв вăрçăран татах та вăйлăрах, татах та хăватлăрах çĕршыв пулса тухĕ.

В. И. Ленин вилнĕренпе 21 çул тултарнă ятпа пулнă хурлăхлă-чаплă лару

Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 21 çул тултарнă ятпа ĕнер Пионерсен çуртĕнче Шупашкар хулинчи партипе совет тата обществăллă организацисен хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Лару президиумĕнче — ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Ахазовпа Андреев юлташсем, ВКП(б) Обком секретарĕн заместителĕ Репкин юлташ, ЦК ВКП(б) çумĕнчи Парти Контроль Комиссин Чăваш АССР-ĕнчи уполномоченнăйĕ Логвин юлташ, Чăваш АССР Совнаркомĕн председатель заместителĕсем Семеновпа Евлампьев юлташсем, ВКП(б) Горкомĕн секретарĕсем Романовăпа Ислюков юлташсем, Хула Совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ, Государство хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссарĕ Митряшов юлташ, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕсем Бочков, Петрухин тата Токарев юлташсем, партин Центральный Комитечĕн заводсенчи парторгĕсем Полуюров тата Брикер юлташсем т. ыт. те.

Хисеплĕ президиума Партин Центральный Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюроне суйлама сĕннине ларăва пухăннисем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

«21 çул Ленинсăр, Ленин çулĕпе» ятлă темăпа ларура ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ М. Андреев юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар иртнĕ çулта Ленинăн соратникĕ, пирĕн çĕнтерӳсене хавхалантарса тата организацилесе пыраканĕ Сталин юлташ гениллĕ ертсе пынипе тунă пысăк çĕнтерӳсем çинчен уйрăмах тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

СССР халăхĕсен аслă çулпуçĕ тата учителĕ, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне ямалли çыру текстне ларури çынсем вăйлăн алă çупса йышăнаççĕ.

Венгрипе перемири тăвасси çинчен калаçса татăлни

Январĕн 18—20-мĕшĕсенче Мускавра Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсем, Венгрипе вăрçакан мĕнпур Пĕрлешӳллĕ нацисен ячĕпе калаçаканскерсем, Венгрипе перемири тăвасси çинчен Венгрин Вăхăтлăх Халăх Правительствин делегацийĕпе калаçнă.

Калаçусенче çаксем пулнă: Совет Союзĕ енчен—В. М. Молотов, В. Г. Деканозов, Г. М. Пушкин, генерал-полковник И. З. Сусайков, контр-адмирал П. А. Трайнин; США енчен—Посол В. А. Гарриман господин, Д. Кеннан господин тата генерал-майор Р. Дин; Великобритани енчен—Эçсен поверенннăйĕ Д. Бальфур господин тата П. Кроствейт господин. Венгрин представителĕсем пулса, калаçусене Венгрин Вăхăтлăх Халăх Правительствин çак уполномоченнăйĕсем хутшăннă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Дьендеши Янош господин, оборона Министрĕ генерал-полковник Вереш Янош тата Министрсен кабинечĕн Статс-секретарĕ Балог Иштван господин.

Калаçусем январĕн 20-мĕшĕнче Венгрипе перемири тăвасси çинчен Килĕшӳ çырса алă пуснипе вĕçленнĕ. Çав Килĕшĕве Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисем хушнипе Совет Союзĕн Маршалĕ К. Е. Ворошилов алă пуснă.

Венгри енчен вăл Килĕшĕве Дьендеши Янош господин, генерал-полковник Вереш Янош тата Балог Иштван господин алă пуснă.

Килĕшĕве алă пуснă вăхăтра Чехословаки Посолĕ З. Фирлингер господин тата Югослави Посолĕ С. Симич господин пулнă.

Перемири Килĕшĕвĕн текстне уйрăмăн пичетлесе тухать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступлени пуçласа ярса, артиллерипе авиаци вăйлăн пыра-пыра çапса пулăшнипе, нимĕçсен Хĕвелтухăç Пруссири нумай вăхăтлăха тунă, шалалла инçе каякан оборонине татнă та, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, пилĕк кун хушши наступлени туса пырса, 45 километра çити малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăна фронт тăрăх 60 километр таран аслăлатнă.

Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем **ПИЛЬКАЛЛЕН, РАГНИТ** ятлă çирĕплетнĕ хуласене тата нимĕçсен оборонин **ШИЛЛЕНЕН, ЛАЗДЕНЕН, КУССЕН, НАУЙЕНИНГНЕН, ЛЕНГВЕТЕН, КРАУПИШКЕН, БРАКУПЕНЕН** ятлă вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 600 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—**УНТЕР-АЙСЕЛЬН, КАЛЛВЕЛЛЕН, ГИРРЕНЕН, ШУППИННЕН, ДРАУГУПЕНЕН, ЭДЕРКЕМЕН, КАРМОНЕН ШОРШИНЕН, ГРОСС КЛАЙН, ЗОДИНЕЛЕН, АУГШТУПЕНЕН** ятлă пысăк ялсем тата **ГРОСС ШОРЕЛЛЕН, РАУТЕНБЕРГ, НАУЙЕНИНГЕН, ТРАКЕНЕН, ГРОСС КЛАЙН** чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, январĕн 19-мĕшĕнче **МЛАВАПА ДЗЯЛДОВО (ЗОЛЬДАУ)** хулисене—çулйĕрсен паха узелĕсене тата нимĕçсен Хĕвелтухăç Пруссири кăнтăрти чикки патне пымалли вырăнсенчи оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене, **ШЛОНЬСК** хулине—çулйĕрсен пысăк узелне тата нимĕçсен **ВИСЛА** шывĕн сылтăм хĕрринчи оборонин тĕреклетнĕ пунктне—штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 350 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — **ДРОНЖДЖЕВО, ЖЕНГНОВО, ШУМСК, ЛИПОВЕЦ, КОСЦЕЛЬНЫ, ШРЕНЬСК, РАДЗАНОВ, ШЕППОВО, РАЦИОНЖ, БАБОШЕВО, ШЕРОМИН, НАБОРУВЕЦ, КРОЧЕВО** ятлă пысăк ялсем тата **ГУРКИ ВОНСКЕ, ГРУДУСК, ПОСАЖЕВО, РАЦИОНЖ, БАБОШЕВО** чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла вирлĕн наступлени туса пырса, январĕн 19-мĕшĕнче Польшăн питĕ пысăк промышленность центрне—**ЛОДЗЬ** хулине тата **КУТНО, ТОМАШУВ (ТОМАШОВ), ГОСТЫНИН, ЛЕНЧИЦА** хулисене, çулйĕрсен паха узелĕсем тата нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсем пулса тăраканскерсене, çапăçса туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, **ОТОЧНО** хулипе чугун çул станцине тата халăх пурăнакан ытти 800 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—**ИЛУВ, КЕРНОЗЯ, СОБОТА, МОНКОЛИЦЕ, ЗГЕЖ, БЕНДКУВ** ятлă пысăк ялсем.

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр туса тата фронт енчен атакăласа, январĕн 19-мĕшĕнче пирĕнпе союзлă Польшăн авалхи столицине тата культурăллă-политикăллă чи паха центрĕсенчен пĕрне — **КРАКОВ** хулине, нимĕçсен оборонин питĕ вăйлă узелĕ пулнăскерне, Домброва çĕркăмрăк районĕ патне пымалли вырăнсене хӳтĕлесе тăнăскерне—штурмласа туртса илнĕ. Çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, **ВЕЛЮНЬ** хулипе чугун çул узелне, **ТАРНУВ** хулипе пысăк чугун çул узелне тата халăх пурăнакан ытти 600 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—**ВЕЛХАТУВ, ЛЕНКАВА, КАМЕНЬСК, ЛЕНЬКИНТСКО ПАЕЧНО, ОЖЕГУВ, ДЗЯЛОШИН, КРАШКОВИЦЕ, ПОНТНУВ, ПРАШКА** (**ВЕЛЮНЬ** хулинчен 19 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, Польшăпа Германи чиккинче ларать), **РУДНИКИ, КШЕПИЦЕ, ТРУСКОЛЯСЫ, ОСТРОВЫ, РАМКШОВИЦЕ, ВЛОДОВИЦЕ, КРОМОЛУВ, ОГРОДЗЕНЕЦ, КШЕШОВИЦЕ, РУДАВА, РАДЛУВ, ЖУХОВА, ТУХУВ** ятлă пысăк ялсем тата **РОЗПША, ГОРЖКОВИЦЕ, ЗЕМКОВИЦЕ, МЕДЗНО, КЛОВУЦК, ВРЕНЧИЦА, ПОНТНУВ, ЯНИНУВ, КШЕШОВИЦЕ, РУДАВА, ЗАБЕЖУВ** чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, январĕн 15-мĕшĕнче **САНОК** хулинчен хĕвеланăçнерехри районран наступлени пуçласа ярса, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татса кĕнĕ те, тăватă кун наступлени туса пырса, 80 километра çити малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăна фронт тăршшĕпе 60 километр таран аслăлатнă. Наступлени тунă вăхăтра фронт çарĕсем **ВИСЛОКА** тата **ДУНАЕЦ** шывĕсем урлă каçса кайнă, **ЯСЛО** тата **ГОРЛИЦЕ** хулисене—нимĕçсен **КРАКОВ** хули енчи оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене—туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—**ЗАКЛИЧИН, ЮРКУВ, ЧХУВ, ИВКОВА, РАЙБИРТ, ЛИМАНОВА, ЛИБРАНТУВА ГРЫБУВ, РЫХВАЛЬД, БАРТНЕ, КРЕНТНА** ятлă пысăк ялсем тата **СКОЛЫШИН, БЕЧ, ЗАГОЖАНЫ, ГРЫБУВ, ПАШКОВА, МАРЦИНКОВИЦЕ** чугун çул станцийĕсем.

БУДАПЕШТ районĕнче пирĕн çарсем çаплах тăшманăн **БУДАПЕШТ** хулин хĕвеланăç пайĕнчи (**БУДАРИ**) хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă.

СЕКЕШФЕХЕРВАР хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă, вăйлă çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан темиçе пункта хăварнă.

Январĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 184 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 59 самолетне персе ӳкернĕ.

Общинăсен палатинче Черчилль калани

ЛОНДОН, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян общинăсен палатинче премьер-министр Уинстон Черчилль сăмах тухса каланă.

Черчилль Итали, Югослави тата Греци тĕлĕшпе Англи тытса пыракан политика çинчен каланă.

Фронтсенчи ĕçсем çинчен Черчилль çапла каланă: «Эпĕ паян пĕр иккĕленмесĕр çапла калатăп: Хĕвеланăçĕнче Германи тунă наступление татăклăн пĕтлентарса лартни çак вăрçă вĕçленессине вăраха ямасть, ăна çывăхартать». «Эпĕ çапла шутлатăп,—тенĕ малалла Черчилль,—нимĕçсем, çавăн пек хаяррăн наступлени туса, хăйсем патне хĕвеланăç енчен çĕмĕрсе пыракан тăвăла сирсе яраймарĕç тата тытса чараймарĕç».

Хĕвеланăçĕнчи наступлени нимĕçсене питĕ пысăк çухатусем тӳстерни çинчен каласа, Черчилль çакна палăртнă: «Çарсем Германие халĕ хăйĕн хĕвеланăçĕнчи фронтне тытса тăма çеç мар кирлĕ, вĕсем унтан та ытларах хĕвелтухăçĕнчи фронтра тата-тата кĕнисене саплама кирлĕ. Хĕвелтухăçĕнчи фронтра вырăс çарĕсен тĕп вăйĕсем Балтикăран пуçласа Будапешт патне çитиччен пĕтĕм фронтпа наступлени туса пыраççĕ. Сталин Маршал питĕ тĕплĕ тăвакан çын. Союзниксемпе пĕрле çапăçас ĕçре вăл палăртнă срокĕсенчен кая юлма мар, вĕсенчен иртсе каять».

«Çакă паллă,—тенĕ малалла Черчилль,—хĕвелтухăçĕнчипе хĕвеланăçĕнчи фронтсем тата Италири сарлака фронт паянтан пуçласа Германие татăклăн çĕнтеричченех вутра пулĕç».

Лăпкă океанри вăрçă çинчен Черчилль çапла каланă: Макартур çарĕсем Филиппин утравĕсене тытса илни японецсене çĕмĕрсе тăкассине тата вĕсем поражени тӳссине пĕлтерсе тăрать.

Черчилль малалла çапла каланă: «Эпĕ çакна палăртса хăварасшăн: тăшмана пĕр сăмахсăр парăнтарассинчен пире никам та пăрса ярас çук. Германипе Япони пĕр сăмахсăр парăнмасăр эпир вĕсемпе калаçас çук, вĕсемпе калаçма кирек мĕнле сĕннине те шута илес çук».

Черчилль çапла хушса каланă: «Германие эпĕ Пĕрлешӳллĕ нацисен ячĕпе çапла калама пултаратăп: «Эсир халĕ парăнас пулсан, вăрçă хыççăн сирĕн 1945 çулта тӳсессинчен калама çук сахал тӳсмелле пулать».

Рузвельтпа тата Сталинпа тĕл пулассине пысăк шанчăк хуратăп, тенĕ Черчилль. Иденпа тата Черчилльпе пĕрле вăл тĕлпулура вĕсен çарпа техника советникĕсем те пулмалла.

„Хĕрлĕ Çарăн çав тери пысăк вăйне тата ăна питĕ лайăх организациленине кăтартса пани“

США ПРЕДСТАВИТЕЛЬСЕН ПАЛАТИН ÇАРĔÇ КОМИССИЙĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ ВАРШАВА ХУЛИНЕ ТЫТСА ИЛНИ ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Совет çарĕсем Варшава хулине илнĕ пирки США представительсен палатин çарĕç комиссийĕн председателĕ ТАСС корреспондентне çапла каланă:

«Варшава хулине тытса илни Хĕрлĕ Çарăн çав тери пысăк вăйне тата ăна çав тери лайăх организациленине пĕлтерет. Пирĕн çарсем хĕвеланăçĕнчен те, хĕвелтухăçĕнчен те Германи патне çывхарса пынă вăхăтра пирĕн задача—паянхи кунтан пуçласа Берлина тытса иличченех пĕрмаях малалла кайса пырасси пулать».

ХĔРЛĔ ÇАР ПЫСĂК ÇĔНТЕРӲСЕМ ТУНĂ ЯТПА ПУЛСА ИРТНĔ МИТИНГ

СОФИЯ, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, паян София хулин площадĕнче Хĕрлĕ Çар Польшăра çав тери пысăк çĕнтерӳсем тунă ятпа нумай çынлă митинг пулса иртнĕ. Митинг уçăличчен нумай малтан София хулин пур кĕтесĕсенчен те площаде фабрикăсен, учрежденисен, çар чăсĕсен, вĕренекен çамрăксен представителĕсем пыма пуçланă.

Болгари самолечĕсем вĕçсе иртнĕ, вĕсен моторĕсен шавĕ артиллери залпĕсемпе хутăшса пынă. Болгарин ирĕклĕ столицин гражданĕсем çав тери савăннă.

Митингра çаксем сăмах тухса каланă: Болгари правительстви ячĕпе портфельсĕр министр Добри Терпешев генерал-лейтенант, Болгари çарĕ ячĕпе çарĕç министрĕ Дамян Велчев генерал-лейтенант тата ытти министрсем, общество деятелĕсем, тĕрлĕ партисемпе ушкăнсен представителĕсем. Пухăннă çынсем ораторсен сăмахĕсене «урра» кăшкăрса, тăвăллăн алă çупса йышăннă. Площадьре çак сăмахсем янăраса тăнă: «Сывă пултăр Сталин Маршал! Сывă пулччăр Сталинград геройĕсем! Сывă пулччăр ирĕклĕхе юратакан халăхсен çĕнтерӳллĕ çарĕсем!»

Сăмахсем каласа пĕтернĕ хыççăн митингра Совет Маршалĕсен—çĕнтерӳçĕсен ячĕпе саламлă телеграммăсем яма йышăннă.

Люблинри предприятисенче пулса иртнĕ митингсем

ЛЮБЛИН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Варшава хулине ирĕке кăларнă ятпа Люблинри шултăра предприятисенче йышлă çынлă митингсем пулса иртнĕ. Çав митингсенче демократиллĕ партисемпе профсоюзсен представителĕсем сăмах тухса каланă.

Митингра тухса калакансем Хĕрлĕ Çарăн нихăçан пулман пек пысăк паттăрлăхĕ çинчен, унăн çулпуçĕн Сталин Маршалăн çав тери пысăк ăсĕ çинчен, гитлерла захватчиксене хирĕç пыракан тата вăрçă хыççăн çирĕп мир тăвассишĕн пыракан пĕрлĕхлĕ кĕрешӳре палăракан Польшăпа совет халăхĕн иксĕлми туслăхĕ çинчен каланă. Митингсенче, тăвăллăн алă çупса, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин ячĕпе тата Польша çарĕн Главнокомандующийĕ Роля-Жимерский ячĕпе саламлă телеграммăсем яма йышăннă.

ВЕНГРИН ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНĔСЕНЧЕ

ДЕБРЕЦЕН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрире политикăллă пысăк çĕкленӳ тата общество пурнăçĕ вăйлăн аталанса пыни палăрать.

Халăхăн тĕрлĕ сийĕсен политикăллă хастарлăхĕ тĕрлĕ формăсемпе палăрать. Пур çĕрте те митингсем, нумай хуласенче — йышлă демонстрацисем пулса иртнĕ. Нумай çĕрте халăх суйлавĕсем туса хунă, çĕршыва фашистла çынсенчен тасатас ĕçе пуçласа янă. Демократиллĕ партисен вырăнти организацисем активлăрах ĕçлеме пуçлаççĕ.

Халăх нимĕçсене те Венгрин [illegible] çав тери курайманлать. Вăхăтлăх правительствăн программине ырласа халăх çĕршыва пĕтес патне илсе çитернĕ çынсене тасатса кăларса халех суда пама ыйтать. Çакăн çинчен пуринчен ытла Тури Венгрин промышленность районĕсенче пулса иртнĕ митингсенче каланă. Çав районсенчи халăх Германи промышленникĕсем хăйне çав тери тискеррĕн эксплоатацилени тӳссе ирттернĕ, мĕншĕн тесен çав пуян облаçа нимĕçсем пĕтĕмĕшпех ярса илнĕ пулнă. Нимĕçсем оборудование Германие илсе кайнă, чи пысăк заводсемпе рудниксене аркатса тăкма хăтланнă. Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пынине пула кăна предприятисене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкасран упраса хăварма май пулнă.

Мишкольцра тата Дьендешра государство аппаратне фашистла элементсенчен тасатас ĕç пуçланнă.

АМЕРИКА ÇĔРШЫВĔСЕН ПУЛАС КОНФЕРЕНЦИЙĔ

ВАШИНГТОН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государство секретарĕн помощникĕ Рокфеллер пичет представителĕсене каланă тăрăх, Америкăри çĕршывсен конференцийĕ [illegible] 15-мĕшĕнче Мексико хулинче уçăлмалла.

Конференцире вăрçăпа мирăн пысăк ыйтăвĕсене сӳтсе-явмалла, вăл ыйтусемпе конференцире пулакан правительствăсем пурте интересленеççĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Маас шывĕ çинче Неймегенран (Голланди) çурçĕртерехре çапăçусем пуçланса кайнă. Ситтардран çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Эхт хулине йышăннă. Халĕ çавăнтан хĕвелтухăçнерехре, Ситтард—Рурмонд çулĕ тăрăх çапăçса пыраççĕ. Эхт хулинчен кăнтăртарахра Суотерена йышăннă.

Файмонвиль районĕнче (Бельги) союзниксем тăшман Очленвальтен çурçĕр еннелле куçма хăтланнине сирсе пăрахнă. Союзниксен бронетанковăй чăсĕсем Реттиньирен пĕр мильăран та çывăхрах ларакан пĕр пункта çитнĕ.

Бастоньрен хĕвелтухăçнерехре Обервампах районĕнче (Рейн облаçĕ) тăшман пехотипе танкĕсем тăвакан нумай контратакăсене сире-сире пăрахнă. Вильцран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре (Люксембург) союзниксем Ноше хулине тасатаççĕ.

Дикирх—Беттендорф районĕнче союзниксен çарĕсем, атака пуçласа ярса, Сюр шывĕ урлă каçнă. Дикирхран хĕвеланăçнерехре Эрпельдингена тăшмантан тасатнă. Унтан хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Беттендорфран çурçĕртерехри тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри пунктсем патне çитнĕ. Эхтернахран хĕвелтухăçнерехре Роопорт хулине тăшмантан тасатнă. Ремихран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, Теттинген районĕнче (Рейн облаçĕ) союзниксен çарĕсем тăшман танкĕсем тунă контратакăсене сире-сире пăрахнă.

Битш çывăхĕнчи (Лотаринги) савăлăн районĕнче тăшман Рейпортвейлер çывăхĕнче союзниксен малти позицийĕсем патне татса кĕме хăтланнă. Ку районра хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Мажино линийĕпе Рейн шывĕ пĕрлешнĕ çĕрте союзниксен çарĕсем Уэнхейм тата Лейтенхейм ялĕсене йышăннă, хаяр çапăçусем хыççăн Сезенхеймпа Герлисхеймран чакса кайнă.

Сантăлăк начар тăни авиаци ĕçĕсене кансĕрленĕ.

ЛОНДОН, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Италире, 5-мĕшпе 8-мĕш армисен участокĕсенче, патрульсем çапăçнă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

БЕЛГРАД, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре Хорватире хаяр çапăçусем пыни çинчен каланă. Тăшман Югослави чăсĕсем ирĕке кăларнă территорине шăтарса кĕме хăтланать, анчах та унăн ĕçĕсем ăнăçмаççĕ. Дони Михоляц—Подравска—Слатина еннелле тăшман танксем пулăшнипе наступлени пуçласа янă. Югослави чăсĕсем, тăтăшах контратакăсем туса, тăшмана чарса тăраççĕ, ăна пысăк çухатусем кӳреççĕ.

Хĕвелтухăç Боснире, Биелина—Брчко çулĕ çинче çапăçса, тăшмана Биелина патне хăваласа янă.

БОЛГАРИН КУЛЬТУРА РАБОТНИКĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ БЕЛГРАДА ПЫРСА ÇИТНĔ

БЕЛГРАД, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Ирĕклĕ Югослави» ятлă радиостанци пĕлтернĕ тăрăх, Белграда Софи университечĕпе Болгари писателĕсен союзĕн делегацийĕ пырса çитнĕ. Икĕ çĕршыври халăхсен культурăллă çыхăнăвне лайăхлатас ыйтусене сӳтсе-явма делегаци Югослави ученăйĕсемпе тата писателĕсемпе тĕл пулмалла.

АЛЕКСАНДЕРПА МАКМИЛЛАН ГРЕЦИЕ КАЙНĂ

ЛОНДОН, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Афины хулине союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ Александер фельдмаршал тата союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнăй штабĕ çумĕнчи министр-резидент Макмиллан пырса çитнĕ. Вĕсем Греци регенчĕпе Дамаскиноспа калаçнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5. Дом печати [illegible] секретарĕн — 4—20, парти пурнăç пайĕн 3—97.
промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 7—31, издательство конторин — 0—23.
НТ 00259 Типография № 1, Управления полиграфической промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № [illegible] Тираж 16.000 экз.